# Акцие хутшăнмалли майсем

Акцие икĕ тĕрлĕ хутшăнма пулать.

1-мĕш вариант. Хăйсем пурăнакан вырăнтах çырма кăмăл тăвакансем диктант текстне 13.00 сехетре Чăваш наци радиовĕн 95.5 FM, 105.0 FM тата 72.41 УКВ хумĕсем çинче, «Тăван радион» 100,3 Fm хумĕсем çинче тӳрĕ эфирта итлеме пултараççĕ. Диктант бланкне http://chrio.cap.ru/sitemap.aspx?id=3046954 сайтра вырнаçтарнă. Компьютерпа Word форматпа çырнă (наборланă) е алпа çырнă текста сканерпа кăларса диктанта вуласа пĕтернĕ хыççăн 10-15 минут хушшинче çак адреспа ярса памалла: chuvdiktant2021@mail.ru.

2-мĕш вариант. Ятарлă вырăнта пĕлĕвне тĕрĕслес текенсене 13.00 сехетре çакăнта кĕтетпĕр:

1) Чăваш Республикин вĕренӳ институтĕнче (М. Горький проспекчĕ, 5-мĕш çурт, лару залĕ);

2) И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн чăваш тата вырăс филологийĕн факультетĕнче (Президент бульварĕ, 19а çурт, 201-мĕш, 304-мĕш аудиторисем);

3) И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн вырăс тата чăваш филологийĕпе журналистика факультетĕнче (Университет урамĕ, 38-мĕш çурт, II-02-мĕш аудитори);

4) Чăваш Республикин наци библиотеки («Чăваш кĕнеки» центр, 201-мĕш пӳлĕм);

5) пурăнакан вырăнта вырнаçнă шкулсенче.

2-мĕш вариантпа диктант çырма кăмăл тунисен chuvdiktant2021@mail.ru.адреспа заявка ярса памалла, çакă диктант çырмалли аудиторисенчи вырăн шутне, бланксене, текст вулакансен йышне палăртма кирлĕ.

Заявка форми:

***Хушамат, ят, ашшĕ ячĕ е вăрттăн ят***

***Пароль (10 сас паллинчен иртмелле мар)***

***Миçе çулта?***

***Ăçта çырасшăн (Шупашкарта-и (хăш пунктра) е пурăнакан вырăнта-и?***